25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 НОЯБРЬ 26 КĔÇНЕРНИКУН 275 (6210) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ленинград, Одесса, Севастополь, Сталинград

Хĕрлĕ Çар çĕнĕ чаплă çитĕнӳсем, çĕнĕ мухтавлă çĕнтерӳсем турĕ! Сталинград тавра «тимĕр унка» туса хунă тесе каппаякан тăшмана пирĕн чаçсем аркатмаллах пырса çапнипе пуçласа янă наступлени ăнăçлăн малалла пулса пырать. Çав ункăна çапса аркатнă, татса ывăтнă. Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерницчен пирĕн çĕршыв савăнса та мухтанса çĕнĕ хыпар илтрĕ: пирĕн çурçĕртен пыракан вăйсем Сталинградăн çурçĕр пайне хӳтĕлекенсемпе пĕрлешнĕ. Атăл çинчи геройла хулана хӳтĕлекенсене хăватлă пулăшу панă, улăп хулана пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларас сехет инçе мар.

Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерницчен куç умне хаваслă та хумхантаракан картина тухса тăрать. Гитлеровецсемпе вĕсен союзникĕсем тĕрлĕ еннелле каялла чакаççĕ. Дон кукăрĕнчи уйхирсем тăшманăн пиншер виллисемпе витĕннĕ. Ноябрĕн 24-мĕшĕнче, пĕр кун хушшинче кăна, тăшманăн 15.000 салтакĕпе офицерĕ вăрă-хурахла авантюрăшăн хăйсен пурнăçĕсемпе тӳлерĕç. 12.000 çынна тыткăна илнĕ. Тăшманăн чаçĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрассине аркатнă, тăшман чаçĕсене тытса пырас пĕрлех çухалнă. Нимĕçсен виçĕ дивизине вĕсен штабĕсемпе, вĕсен генералĕсемпе пĕрлех тыткăна илнĕ. Тăшман хăй каялла чакнă чухне пăрахса хăварнă тата пирĕн чаçсем тытса илнĕ орудисем, танксем, автомашинăсем, винтовкăсем, автоматсем халĕ ĕнтĕ пĕр-пĕтĕм арсенал пулса тăраççĕ—1.164 оруди, 431 танк, 3 миллион снаряд, 18 миллион патрон тата ытти те. Пирĕн войскăсем çĕнĕ хуласемпе халăх пурăнакан çĕнĕ пунктсене йышăнса илнĕ.

Çакă нихăçан манăçа юлми кунсенче пирĕн пĕтĕм халăх тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсене тав тăвас аслă кăмăлпа пурăнать. Çак туйăма мĕнле сăмахсемпе каласа пама пулать-ха! Сталин юлташ, Оборона Халăх Комиссарĕ, мĕнпур халăхăн çак кăмăл-туйăмне СССР Верховный Совет Президиумĕнчен «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн», «Одессăна хӳтĕленĕшĕн», «Севастополе хӳтĕленĕшĕн», «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн» ятлă медальсем тума ыйтнипе палăртрĕ. Çав хуласене хӳтĕлекенсен кăкрисем çинчи медаль геройла кунсене аса илтерсе тăракан медаль пулĕ. Çав геройла кунсенче пĕтĕм çĕршыв паттăр кĕрешĕве сывлама чарăнса тенĕ пек сăнаса тăнă, çав геройла кунсенче пĕтĕм тĕнче хăй совет воинĕсен çирĕплĕхĕпе хăюлăхĕнчен, вĕсем тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăшмана хирĕç кĕрешнинчен тĕлĕнсе савăнни çинчен палăртса тăнă.

Ленинград, Одесса, Севастополь, Сталинград геройĕсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Сталинград патĕнче командовани ăслăн та чаплăн хатĕрлесе хунă плана тĕрлĕ енчен куçса пырса пурнăçа кĕртеççĕ. Тăшмана пĕр вăхăтрах темиçе тĕлтен пырса çапнă. Тăшман çакна кĕтмен. Хĕрлĕ Çар ăста та çавăрăнăçуллă маневрсем тума пултарнин, тĕрлĕ чаçсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса пыма пултарнин, дисциплинăпа çапăçури йĕркелĕхĕн паха тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕ.

Сталинграда хӳтĕлекенсем çавăн пек чаплăн та çирĕп тăрса кĕрешнине пула, вĕсен иксĕлми паттăрлăхĕпе хастарлăхне пула, вĕсен нимĕнле вăй та—тăшманăн вăйĕсем йышлăрах пулни те, унăн техники те, Сталинград тĕлĕнче пĕлĕт пек явăнса çӳрекен тăшман самолечĕсем урса кайса иртĕхни те хавшатма пултарайман паттăрлăхне пула, Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени пуçласа яма пултарчĕ. Ишĕлсе пĕтнĕ çуртсем хушшинче тăрса, вут-çулăм тăвăлĕ айĕнче тăрса, Сталинграда хӳтĕлекенсем хулана алăра тытса тăнă, унăн кварталĕсене хӳтĕленĕ, унăн урамĕсене хӳтĕленĕ, унăн çурчĕсене хӳтĕленĕ.

Хуласене хӳтĕлесси—çакă вăл Хĕрлĕ Çар вăрçăсен историне кӳнĕ çĕнĕ япала пулса тăрать. Крепоçсене геройла хӳтĕленин тĕслĕхĕсем иртнĕ вăрçăсенче те пулнă. Анчах та çирĕплетмен хуласене çавăн пек хӳтĕлени нихăçан та пулман! Çакна ăна гитлеровецсем кĕтмен, çакна кĕтсе илме вĕсем хатĕрленмен. Халиччен вĕсем Хĕвеланăç Европăра пĕр-пĕр хула çывăхне пырса çитме пултарсан, çав хулана вĕсем йышăнса илнĕ тесе шутланă. Хулашăн пыракан кĕрешӳ мĕн иккенне вĕсем пирĕн çĕршывра кăна пĕлчĕç. Хулана совет патриочĕсем кăкăрпа тăрса хӳтĕлеççĕ пулсан, совет хули крепость пулса тăнине вĕсем пĕлчĕç.

Совет хулисене çавăрса илсе тытса илесси вĕсене мĕн хака ларнине гитлеровецсем кая юлса чухласа илчĕç. Ленинград, Одесса, Севастополь, Сталинград патĕнчи çапăçусем, çавăн пекех тата Тула, Мускав, Воронеж тата ытти нумай хуласем патĕнчи çапăçусем те гитлерла йытă кĕтĕвĕсене хавшатса, юнсăрлатса халран ячĕç, вĕсен салтакĕсен шухăш-кăмăлĕсене пусарса лартрĕç, гитлерла çаратуçăсен наступлении хавхаланăвĕпе оборонăри вăйне чакарса халсăрлатрĕç.

Отечественнăй вăрçăн пуçламĕшĕнчех Сталин юлташ совет халăхне совет çĕрĕн кашни пусăмĕшĕн пурнăçа хĕрхенмесĕр кĕрешме чĕнчĕ, кашни совет çынни чĕрине çак сăмахсем çирĕппĕн кĕчĕç: «Хĕрлĕ Çарăн, Хĕрлĕ Флотăн тата Совет Союзĕнчи мĕнпур гражданĕсен совет çĕрĕн кашни пусăмне хӳтĕлемелле, хамăрăн хуласемпе ялсемшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçмалла, хамăрăн халăха тивĕçлĕ хăюлăха, пуçарулăха тата тавçарулăха кăтартмалла».

Юратнă çулпуçăн тата полководецăн—аслă Сталинăн çак чĕнĕвĕ пурнăçа кĕрсе пырать. Совет хулисем тăшманăн çулĕ çинче иксĕлми крепоçсем пулса тăчĕç. Тăшман, Совет çĕршывĕн анлă та тикĕс талкишĕ çине пăхса, хăйне хăй унăн танковăй корпусĕсем çав çĕр талкишĕ урлă хăвăрттăн чупса каçас шухăшпа йăпатнă, хăйĕн мĕнпур ĕмĕчĕсене танк вăйлă маневрсем тума пултарнипе йăпатнă. Хĕрлĕ Çар вара тăшмана пĕр вырăнта, хуласем патĕнче тата хуласенче, уйăхшерĕн тапăртатса тăмалла туса хучĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен танкне тăллантарса лартрĕ. Вăл тăшмана урамсенче çапăçтармалла турĕ, совет хулисем вара оборонăн çирĕп крепоçĕсем пулса тăчĕç.

«Ленинградшăн, Одессăшăн, Севастопольшăн, Сталинградшăн пынă çапăçусенче боецсемпе командирсем çапăçури пысăк опыта пухрĕç. Мускавпа Тулăна, Одессăпа Севастополе, Ленинградпа Сталинграда геройла хӳтĕлекенсем вĕçĕ-хĕррисĕр паттăрлăхăн, хурçă пек çирĕп дисциплинăн, çирĕплĕхĕн тата çĕнтерме пĕлнин тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Пирĕн пĕтĕм Хĕрлĕ Çар çав геройсемпе танлашать». (Сталин).

Сталинград патĕнче Хĕрлĕ Çар Сталин юлташ хăйĕн приказĕнче лартнă задачăна пурнăçа кĕртет, вăл совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен тасатать. Вăл хăйĕн тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçа кĕртет, вăл мĕнпур халăхсене, нимĕç фашисчĕсен ури айĕнче асапланакансене, ирĕклĕх кӳрет. Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çитĕнĕвне тĕнчери халăхсем тĕлĕнсе те хавхаланса кĕтсе илеççĕ.

Гитлер хăй совет çĕрне шалалла куçса пынă çула совет хулисен ячĕсемпе каппайса та çуйăхса палăртса пынă. Халĕ ĕнтĕ гитлерла çар хавшаса халсăрланса пынин çулĕ те, унăн пуçĕпех арканса каясси патне чакмалли мухтавсăр çулĕ те совет хулисен ячĕсемпе палăрса пырать. Гитлерла йытă кĕтĕвĕ çав çул çине тухрĕ, çав çул тăрăх вăл Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла ывтăнать. Хĕрлĕ Çар татах та хăватлăнрах пыра-пыра çапĕ. Çитĕнӳсене çирĕплетмелле, тăшмана малалла çапса пымалла, тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар, касса çитермен вăрман ӳссе ларма пултарассине, вĕлерсе çитермен тискер кайăк хăрушă пулнине асра тытмалла,—çакăн пек ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн геройла чаçĕсем умĕнче тăракан задача. Пĕтĕм çĕршывăн задачи вара—Хĕрлĕ Çара пулăшасси, пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе çĕнтерӳ тума май парасси, малалла куçакан тăван Хĕрлĕ Çар хыççăн хĕçпăшалсемпе боеприпассем анлă юхăмпа таттисăр куçса тăччăр тесен, хамăрăн вăйсене икĕ хут, виçĕ хут ӳстерсе ĕçлесси пулса тăрать.

Совет воинĕсем хамăрăн аслă тăван çĕршывшăн, хамăрăн тĕрĕс ĕçшĕн— аслă Ленин, аслă Сталин ĕçĕшĕн çапăçăва кĕреççĕ! Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

(«Правда», ноябрĕн 25-мĕшĕнчи умстатьяран).

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пыраççĕ

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград хули районĕнче, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă. Фронтăн çурçĕр-хĕвеланăç участокĕнче пирĕн войскăсем РЫЧКОВСКИЙ, НОВОМАКСИМОВСКИЙ, СТАРОМАКСИМОВСКИЙ ятлă чугунçул станцийĕсене тата МАЛОНАБАТОВСКИЙ, БИРЮЧКОВ, РОДИОНОВ, БОЛЬШАЯ ДОНЩИНКА, МАЛАЯ ДОНЩИНКА ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ.

Большая Донщинка тата Малая Донщинка ятлă халăх пурăнакан пунктсен районĕнче противникăнне 22-мĕш танковăй дивизин маларах çавăрса илнĕ чаçĕсене аркатса тăкнă.

Ноябрĕн 25-мĕш кунĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ 15 пин çын чухлĕ ӳснĕ. Çапăçусем пынă вăхăтра, ноябрĕн 19-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче, пирĕн войскăсем противникăнне 51 пин салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çапăçусем пынă вăхăтра, ноябрĕн 19-мĕшĕпе 25-мĕш хушшинче, пирĕн войскăсем тытса илнĕ: пур тĕрлĕ калибрлă орудисем—1.300, автомашинăсем—5.618, боеприпассемпе снаряжени тата продовольстви склачĕсем—52.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 6 пин çынна çити вилсе пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата кăнтăрaллараххри вырăнсенче малтанхи еннеллех ăнăçлăн наступлени туса пынă.

Пирĕн войскăсем **Суровикино** хулипе станцине, халăх пурăнакан пунктсене: **Зимовский, Камышинка, Ближняя Перекопка, Трехостровская, Сиротинская, Томилин, Акатовка, Латошанка, Умацево, Перегрузный** пункчĕсене тата **Садовое** хулине тытса илнĕ.

* * *

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата 50 автомашинине пĕтерсе тăкнă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине тăватă рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем майĕпен малалла куçса пынă тата темиçе вуншар дзотпа блиндажа противникран тасатнă. Противникăн 900 салтакĕпе офицерне тата нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Хулан кăнтăр енчи пайĕнче артиллерипе миномётсенчен персе хатĕрленнĕ хыççăн пирĕн чаçсем наступлени пуçласа янă та тактика енчен паха пулса тăракан высотана йышăнса илнĕ. Тăшманăн пехотине виçĕ батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Пĕр участокра темиçе хут хаяррăн çапăçнă хыççăн, тăшманăн совет чаçĕсем çавăрса илнĕ группировки парăннă. Пирĕн войскăсем противникăн виçĕ дивизине генералĕсемпе тата вĕсен штабĕсемпе пĕрлех тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем каялла чакса пыракан противника хăваласа пырса унăн пĕр аэродромне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Нимĕçсене çавтери сасартăк пырса çапнипе вĕсен самолечĕсем сывлăша вĕçсе хăпарма ĕлкĕреймен. Пирĕн боецсем нимĕçсен 25 самолетне пĕтерсе тăкнă тата противникăн юсавлă 17 самолетне тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăрaлларахра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлениллĕ операцисем туса пынă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатнă. Н-ски соединенин боецĕсем каялла чакса пыракан противника хăваласа пырса противникăн пехотине виçĕ полк таран пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ремонтра тăнă 54 танкне, 31 орудине, 57 миномётне, 100 пулемётне, 100 километр тăршшĕ телефон кабельне, пĕр миллион таран винтовка патронне, тĕрлĕ 5 складне тытса илнĕ. Унсăр пуçне, 36 танкне, 31 орудине, 6 самолетне тата противникăн ытти тĕрлĕ çар техникине пĕтерсе тăкнă. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра тăшманăн пехоти танксем пулăшса пынипе пирĕн позицисене атакăланă. Н-ски часть контратака тунă та гитлеровецсене хăйсен малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Çав çапăçура нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Вĕсен 2 танкне çунтарса янă, 2 автомашинине, ултă кĕпçеллĕ пĕр миномётне тата пĕр орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тинĕс пехотин чаçĕсем противника пысăк çухату тӳстернĕ. Кузьмин юлташ ертсе пыракан подразделени нимĕçсене атакăланă та гитлеровецсен офицерĕсенчен тăракан штрафной ротине пĕтерсе тăкнă. Степанов юлташ ертсе пыракан подразделени, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, пĕр высотана йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче краснофлотецсем 400 гитлеровеца вĕлернĕ, 23 пулемет, 2 радиостанци, 5 миномет, 20 пин патрон, винтовкăсем, гранатăсем тата минăсем тытса илнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен пĕр отрячĕ ноябрь уйăхĕн пĕррремĕш çуррине противникăн виçĕ поездне крушени тунă. 3 паровоз, 10 вагон—салтаксемпе пĕрлех — тата çар техники тиенĕ 30 платформа çĕмĕрнĕ.

* * *

Кубаньри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 70 çынна вĕлернĕ тата гитлеровецсем халăхран туртса илсе Германие яма хатĕрлесе хунă продовольстви складне çунтарса янă.

* * *

Югослави партизанĕсем, Сухачпа Любицы патнелле наступлени туса пыраканскерсем, итальянецсен 4 батальонне аркатса тăкнă. Тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 500 салтака ытла тыткăна илнĕ. Партизансем 600 винтовка, 24 пулемет тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** хули районĕнче малтанхи еннеллех ăнăçлăн наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем активлăн çапăçса малалла куçнă. Хулан кăнтăр хĕрринче совет чаçĕсем темиçе высотана тата противникăн тĕреклетнĕ темиçе позицине йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 4 оруди, 2 миномет, 3 трактор тата 22 километр тăршшĕ телефон кабельне тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противник хирĕç тăнине çĕнтерсе малалла куçса пынă. Пĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн пехотнăй полкне аркатса тăкнă та оборонăн вăйлă тĕреклетнĕ узелне йышăнса илнĕ. 3 танк, 16 оруди, 21 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем каялла чакса пыракан противника хăваласа пырса 21 танк, 32 оруди (вĕсенчен саккăрăшĕ—инçе перекенскерсем), 30 миномет, 100 лав ытла, боеприпассен 3 складне тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăрaллараххра пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Противник çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питех те пысăк çухатусем тӳсет. Н-ски соединени пĕр талăкра тăшманăн 3.000 салтакĕпе офицерне çити, 33 бронемашинине тата 20 орудине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре вырăнти çапăçусем пынă. Пĕр участокра противник пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Вĕсене пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе кĕтсе илнĕ. Нимĕçсем вара, пысăк çухатусем тӳссе, хăйсен малтанхи рубежĕсем патне чакнă. Тепĕр участокра тăшманăн разведчикĕсен группине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче нимĕçсен пехоти танксем пулăшса пынипе Н-ски часть тăракан вырăна кĕрсе кайма хăтланнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен атакине сирсе янă. Çав çапăçура противникăн 200 салтакпа офицер таран вилнĕ. Нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн подразделенисем нимĕçсен пехотин пĕр ротине атакăланă та пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсен батальонĕ 3 танк пулăшса пынипе контратака тунă, анчах та пирĕн войскăсем пенипе çĕр çумне лапчăннă, унтан вара хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсем противникăн 11 дзотне тата икĕ наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ.

Сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери пенипе Ленинград патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Полесье облаçĕнчи районсенчен пĕринче партизансем нимĕçсен карательнăй отрядне аркатса тăкнă. Гитлеровецсем темиçе кун хушши хуçаланса пурăннă, хресченсенчен выльăх-чĕрлĕхе, тырра тата хаклă япаласене туртса илнĕ. Карательсем çав çаратса пухнă пурлăха автомашинăсемпе лавсем çине тиенĕ те вĕсене ĕне кĕтĕвĕпе пĕрле чугунçул станцине ăсатнă. Партизансем çав обоза йĕрлесе тупнă та тапăннă. Пуçланса кайнă тытăçура 52 нимĕç салтакне вĕлернĕ. Партизансем хресченсене 150 ĕне, мĕнпур продуктсене тата гитлеровецсем çаратса илнĕ япаласене хресченсене каялла тавăрса панă.

АВĂН ÇАПСА ПĔТЕРМЕЛЛИ ÇИРĔМКУНЛĂХ

Пĕр кун хушшинче 80 тонна тырă леçнĕ

КӲКЕÇ, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Иккассинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хирĕç ăнăçлă наступлени туса пыни çине ответлесе, государствăна 56 тонна тырă леçсе панă. Колхоз ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă. 27 колхоз государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнă.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче, пĕр кун хушшинче, районри колхозсем хатĕрлев пунктне 80 тонна тырă леçсе панă.

И. ВЕДИН,
Хатĕрлев наркомачĕн районри уполномоченнăйĕ.

Хĕрлĕ обозсем организациленĕ

СОВЕТСКОЕ, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхоз ĕнер вунă лавлă хĕрлĕ обоз организацилесе государствăна тырă леçсе пачĕ, тырă памалли обязательствăна тултарчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç ăнăçлă наступлени туса пынă хыпара илнĕ хыççăн тата лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. Халь тырă типĕтмелли сушилкăсенче государствăна пама кунĕн-çĕрĕн тырă типĕтеççĕ, Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăр çапăçăвне хĕрлĕ обозсем организацилеснипе ответлеççĕ. Васкасси ялсоветĕнчи Ильин ячĕпе тăракан «Клевер», «Красная Армия», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем пурте государствăна тырă парса татрĕç

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Молотилкăсем мĕншĕн ĕççĕр тăраççĕ?

Шăхасан МТС-ĕн руководителĕсем колхозсен шалти организациллĕ ĕçĕпе сахал интересленеççĕ, нумай чухне колхоз руководителĕсен наянлăхĕпе килĕшсе, ĕçе фронт ыйтнă пек туса пырассишĕн кĕрешмеççĕ. Колхозсене ертсе пырас ĕçре нимĕнле кăтартуллă ĕç туни те çук, вăхăта ытларах пушă сăмах çапса ирттереççĕ.

МТС бригадисем ĕçлекен нумай колхозсенче авăн çапас ĕç чăтма çук япăх пулса пырать. Е молотилкăсем ĕçлеççĕ—итем çинче çителĕклĕ таран çын çук, е колхозниксем пур — молотилкисем ĕçлемеççĕ.

«Красный Октябрь» колхоз правленийĕ колхозниксен ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе пымасть. Кунта ĕçе кашни кун миçе колхозник тухнине те шута илмеççĕ, ĕçе ăмăртса тăвасси пачах çук. Çавна пула МТС-ĕн сложнăй молотилки часчасах ĕççĕр ларать, бригада хăйĕн ĕç графикне тултарса пымасть. МТС руководителĕсем çаплах фронтри пек ĕçлемелли çинчен калаçаççĕ, анчах ĕçĕ çук.

Куйбышев ячĕпе тăракан колхозра МТС-ĕн 11-мĕш номерлĕ бригади ĕçлет. «МК-1100» маркăллă молотилка пилĕк кун хушшинче пурĕ те 40 тонна çеç тырă çапнă. График тăрăх 75 тонна çапмалла. Çакăн пек ĕçлемелле-и халь, тăван çĕршывра хаяр вăрçă пынă вăхăтра? Ку колхозра МТС работникĕсем пĕрре çеç мар пулнă, анчах вĕсем колхоза пулăшман, çакна уççăнах палăртмалла.

МТС-ĕн ытти молотилкисем те графика тултарса ĕçлемеççĕ. Ыйтас пулать, Н. Константиновпа Ф. Ижутов юлташсем хăçан вăрçă вăхăтне тивĕçлĕн ĕçлеме пуçлаççĕ?

В. ЯКОВЛЕВ.

Жнейкăсемпе сеялкăсем уйрах лараççĕ

СОВЕТСКОЕ. Уйхирти ĕçсем вĕçленни чылай вăхăт иртрĕ. Ялхуçалăх машинисене тирпейлĕн пуçтарса хумалла, килес çул ĕçлеме юсамалла. Кашни машина халĕ питĕ кирлĕ, ăна çак вăхăтра çĕнĕрен илме йывăр. Çакна шута илсе, ялхуçалăх ĕçĕнчен пушаннă машинăсене колхозсен тирпейлĕн сарайсене пуçтарса лартмалла.

Хĕрлĕ Çыр колхозĕ машинăсем çине ытла та чунсăррăн пăхать. Колхозăн икĕ жнейки, пĕр сеялки вар лупашкинче лараççĕ, плугсемпе сӳресем уйрах, суха тунă çĕртех выртаççĕ.

Часах юр çуса лартма пултарать. Колхозăн машинисем юр айне пулса юлма пултараççĕ. Колхоз председателĕ М. Майорова юлташăн çавна шута илмелле.

И. КОНСТАНТИНОВ.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Ленинграда, Одессăна Севастополе тата Сталинграда хӳтĕлекенсене пурне те наградăлама хăйне уйрăм медаль туса кăларма Оборона Халăх Комиссариачĕ СССР Верховный Совет Президиумне ходатайство тăратнă; çав медальсен, ячĕсем çакăн пек пулмалла: «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн», «Одессăна хӳтĕленĕшĕн», «Севастополе хӳтĕленĕшĕн», «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн».

Çав ходатайствăра, Сталинграда хӳтĕлекен армисене кăтартса панăскерте, нимĕçсем Сталинграда илесшĕн пулса чи вăйлăн пыра-пыра çапнине сирсе ярас ĕçре 62-мĕш арми, унăн командующийĕ генерал-лейтенант В. И. Чуйков юлташ тата унăн тĕп помощникĕсем—полковник Горохов, генерал-майор Родимцев, генерал-майор Гурьев, полковник Болвинов, полковник Гурьев, полковник Сараев, полковник Скворцов юлташсем тата ыттисем те, çавăн пекех тата артиллеристсемпе летчиксем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă.

Вăл ходатайствăра Ленинграда, Одессăна, Севастополе тата Сталинграда хӳтĕлекенсенчен уйрăмах палăрнисене орденсемпе тата медальсемпе наградăлама, çавăн пекех тата вĕсене Совет Союзĕн Геройĕ ятне пама сĕннĕ.

Фронтри хыпарсем пире савăнтараççĕ

ВĂРНАР, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Чугунçул валли вутă хатĕрлеме леспромхоза колхозсенчен ĕç вăйĕ килсех тăрать. Çĕнĕрен килнĕ колхозниксене леспромхоз ĕçе вырнаçтарать, парти организацийĕ вĕсем хушшинче политмассăллă ĕçе туса пырать.

Совет Информаци Бюровĕн юлашки сехетре панă пĕлтерĕвĕ тăрăх ноябрĕн 24-мĕшĕнче ирхине тата каçхине рабочисем хушшинче калаçусем туса ирттертĕмĕр.

Совет войскисем Сталинград районĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыни вăрманта ĕçлекенсене питĕ савăнтарать. Фронтри çитĕнӳсем çине ответлесе, вутă касакансемпе турттаракансем ялан хăйсен тухăçлăрах ĕçлеме пулчĕç. Сарăклă пунктĕнчи стахановец Федоров юлташ, касас нормăна 200 процент тултараканскер, малашне унтан та ытларах тултарма пулчĕ. Çакăн пек обязательствăсем ытти рабочисем те илеççĕ.

С. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) Обкомĕн леспромхозри парторгĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕпе хавхаланса

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕпе хавхаланса, комбинатри рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстерчĕç. Петров юлташ начальник пулса ертсе пыракан цехри стахановецсем маляр Гумелюк ноябрĕн 24-мĕшĕнче хăйĕн ĕç нормине 312 процент, Ишмендеров — 369 процент, Филиппов — 259 процент, Казакова — 260 процент тултарчĕç. Хăма çуракан цехри рабочисем те ĕçри хăвăртлăхсене ӳстерчĕç. Трифонов бригади ноябрĕн 23-мĕшĕнче хăйне панă задание 209 процент, Чурков бригади 190 процент тултарчĕç.

Х. ЛИСИН.

ВКП(б) Мускав организаци активĕн пухăвĕ

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав организацийĕн активĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Мускав парти организацийĕн черетлĕ задачисем çинчен ВКП(б) Мускав Облаçпа тата Хула Комитечĕсен секретарĕ А. С. Щербаков юлташ доклад туса панă.

Пирĕн çĕршыв,—терĕ Щербаков юлташ,—гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç [illegible] вăрçă тăвать. Çав вăхăт хушшинче партин Мускав организацийĕ вăрçă обстановки кăларса тăратнă хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи питех те кирлĕ задачăсене пĕр хутчен кăна мар пурнăçланă. [illegible] Халĕ пирĕн мĕнпур практикăллă ĕçе Сталин юлташăн Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладĕнче тухса тăракан задачăсене пурнăçа кĕртессе [illegible]. Çак задачăсен вĕçĕ — гитлерла государствăна аркатса, гитлерла çарпа унăн руководителĕсене пĕтерсе тăкасси, Гитлерăн «Европăри çĕнĕ йĕркине» аркатса тăкса çав «йĕркене» тăвакансене ответ тытмалла тăвасси пулса тăрать.

Уйрăмах Мускав тата Мускав облаçĕнчи промышленноçĕ октябрь уйăхĕнче [illegible] планне пурнăçа кĕртнине [illegible] Щербаков юлташ [illegible]. [illegible]

[illegible]

Щербаков юлташ топливо [illegible]

калармалли бассейнан еçесшен Мускав парторганизацийĕ ответлă пулса тăрать, унăн кăмрăк кăларас ĕçе вăйлатма практикăллă пулăшу памалла!

Ялхуçалăхĕнчи задачăсем çине куçса Щербаков юлташ пирĕн колхоз стройĕ вăрçă вăхăтĕнчи тĕрĕслеве чыслăн тӳссе ирттернине кăтартса парать. Çак тĕлĕшпе Мускав облаçĕ хăех паха примерсенчен пĕри пулса тăрать. Йывăрлăхсене пăхмасăрах, колхозсем суракипе тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăрçăччченхинчен хăвăртрах та организо[illegible] пусса иртерĕç. Çакă ĕнтĕ вăл пирĕн колхоз стройĕн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшне пурнине кăтартса парать, анчах çакна каламалла, çав майсемпе чылай çителĕксĕр усă курассă-ха.

Ялхуçалăхĕнче халĕ суракине хатĕрленесси тĕп ĕç пулса тăрать. Колхозсен хăйсене валли вăрлăхсем кирлĕ таран пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе хума, кĕрхи тырăсен калчисене лайăх сыхласа хăварма [illegible] пĕр тутă хĕл [illegible] туса [illegible] ялхуçалăх [illegible] тытăнмалла [illegible] ялхуçалăхне [illegible].

Партин Мускав организацийĕн паха [illegible] тата парать [illegible] кирлĕ [illegible] валли [illegible] хатĕрлесе парать.

[illegible] ĕçсем пирки [illegible] вăрçă [illegible] кунне [illegible] хăшпĕр [illegible] мĕн ыйта[illegible] пырать. [illegible] пĕре [illegible] кулленхи [illegible] — партипе [illegible] союз организацийĕсене пулса тă[illegible] юлташ.

[illegible] пайĕнче [illegible] ĕçĕсем [illegible] агитаци [illegible] задачă [illegible] парти организацийĕн революци [illegible] пысăк [illegible] кашни [illegible] вĕсене [illegible] мар.

[illegible] вĕçлет [illegible] — гитлерсене синелле [illegible] вĕсем [illegible] тăрат [illegible] пурнăçсене [illegible] гитлерсене [illegible]. Вĕсем [illegible] паттăр [illegible] тата [illegible] ноябрĕн [illegible] докладĕнче [illegible] килсе [illegible] Мускав [illegible] тăрать [illegible] Хĕрлĕ [illegible] асла [illegible] нимĕçсен [illegible] тăтах [illegible] çук, [illegible] та аркатса такрамар. Иккеленмелли çук, нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкас

аслă ĕçре Мускав ĕççыннийĕсем пирĕн çарпа пирĕн халăхăн малти ретĕнче пулнă, малти ретре тăраççĕ тата малашне те малти ретрех тăрĕç!

Щербаков юлташăн юлашки сăмахĕсене актив нумайччен тăвăллăн алă çупса кĕтсе илет.

Щербаков юлташăн доклачĕ тăрăх пуçланнă прениесенче парти организацийĕсен секретарĕсем, совет тата хуçалăх работникĕсем сăмахсем тухса каланă. Вĕсем Мускав организаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен чăрăнса тăнă тата çав задачăсене пурнăçа кĕртме чăрмантаракан çитменлĕхсене уçса панă.

Актив пухăвĕ Мускав парторганизацийĕ умне Сталин юлташăн 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ докладĕнчен тухса тăракан практикăллă задачăсене палăртса, пĕр шухăшлăн резолюци йышăннă.

Парти активĕн пухăвĕ хуçалăхпа парти руководителĕсенчен ноябрьти плана кашни уйрăм предприяти енĕпе пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме, çулталăкри плана срокчен тултарас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма, предприятисен ĕçри хăвачĕпе туллин усă курма, пур ĕçре те перекетлĕхĕн çирĕп режимне тытса пыма тата уйрăмăнах топливăпа электроэнерги перекетлеме хушса хăварнă.

Резолюцире вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе, Мускав патĕнчи çĕр кăмрăк бассейнне пулăшас, суракине хатĕрленес, сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланас ĕçе пур енĕпе те çирĕплетес. Хĕрлĕ Çар валли боевой резервсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе практикăллă чылай мероприятисем палăртнă. Мĕнпур организацисем умне предприятисенче, колхозсемпе совхозсенче, учрежденисенче, пурăнмалли суртсемпе общежитисенче партиллĕ-политикăллă ĕçе малалла çирĕппĕн вăйлатса пырас задачăна лартса, парти активĕн пухăвĕ партиллĕ-политикăллă ĕçе Сталин юлташăн историллĕ докладĕнчен тухса тăракан политикăллă тата хуçалăхри питех те кирлĕ задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе туса пымаллине кăтартса хăварнă. Пуху парти организацийĕсене кашни коммунистран хушнă ĕçе пурнăçа кĕртме ыйтассине вăйлатма хушнă, мĕнпур партипе комсомол, профсоюзсемпе совет организацийĕсене политикăллă сыхăлăха ӳстерме хушнă.

Активăн пухăвĕ Пĕтĕм Союзри Коммунистсен партин Центральный Комитетне çапла шантарса каланă: Мускаври тата Мускав облаçĕнчи ĕççыннисем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçа кĕртĕç, Сталин юлташ совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатас тĕлĕшпе лартнă пархатарлă задачăна пурнăçа кĕртме мĕн кирлине фронт валли пурне те туса парĕç.

Резолюцин «Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç, учитель, полководец Сталин юлташ!» текен юлашки сăмахĕсене аслă Сталина чысласа, нумайччен алă çупса, тăвăллă оваципе кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

МОПР членне кĕреççĕ

КАЛИНИНО. Районри МОПР ячейкисенче ĕç чылай лайăхланчĕ, МОПР членĕсен йышĕ те ӳсрĕ. Ячейкăсенче Сталин юлташăн докладне пĕрле пуханса сӳтсе-явнă хыççăн рабочисемпе служащисем, колхозниксем тата вĕренекенсем МОПР членĕсен ретне кĕреççĕ. Çак кунсенче Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозри МОПР ячейкине çĕнĕрен 60 колхозник хутшăннă. Уйкас Юнтапари вăтам шкулта, Çĕнкасри «Комсомол» колхозра, госбанк отделенийĕнче, прокуратурăра, больницăра, райпотребсоюзра МОПР ячейкисем çĕнĕрен организациленĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Ют çĕршывсенче

Хĕрлĕ Çар Сталинград районĕнче наступлени туса пыни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АНГЛИЯ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Сталинград патĕнче Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕнине Англире хавассăн кĕтсе илнĕ. Мĕнпур хаçатсемпе радио çав событи çинчен нумай çыраççĕ, нумай калаççĕ.

«Стар» хаçат çакна кăтартса парать: ноябрь уйăхĕ вăл Гитлерăн шанчăкĕсем нумайĕшĕ саланса кайнă уйăх пулса тăрать, тет.

«Сталинград улăп пек çĕкленчĕ. Сталинграда хӳтĕлекенсем валли хатĕрленĕ михĕ ăшне халь Гитлерăн Сталинград патĕнче тăракан пысăк çарĕ кĕрсе ӳкрĕ. Çав миххе çыхса лартсан, Германия поражени тӳсес хăрушлăх умне пырса тăрать».

«Таймс» хаçат çапла çырать: иртнĕ эрнере Владикавказ районĕнче совет войскисем питĕ вăйлăн контратака туни малашне тата пысăкрах событисем пулма пултарасси çинчен шухăшлаттарнăччĕ. Чăнах та çавăн хыççăнах совет войскисем тата тепĕр хут, тата вăйлăрах пырса çапрĕç. Сталинград тавра пынă хаяр çапăçусем çакна лайăх кăтартса пачĕç: пĕр-пĕрне хирĕç тăракан икĕ çартан Хĕрлĕ Çар çирĕпрех, вăйлăрах, чăтăмлăрах пулса тăчĕ. Нимĕçсемшĕн халь каялла чакни лайăхрах пулнă пулĕччĕ. Анчах та Гитлер хальхи позицисенчех тытăнса тăма хушать. Гитлер пуçарулăха виçĕ çул хушши хăйĕн аллинче тытса тăчĕ, халĕ ĕнтĕ унăн çав пуçарулăха аларан вĕçертсе яма тивет. Эпир хĕвелтухăçĕнче вăйлăн наступлени тунипе тепĕр вăхăтрах хĕвеланăçĕнче те вăйлă наступлени тума ыйтатпăр.

çĕр Африкăри, Çĕнĕ Гвинейăри тата ытти фронтсенчи событисем çинчен çырнинчен нумайрах çыраççĕ, нумайрах калаççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла çырать: юлашки икĕ эрнере американецсем пуринчен ытла Çурçĕр Африкăри тата Лăпкă океанăн кăнтăр пайĕнчи событисем çинчен шухăшларĕç. Анчах та Совет Информаци Бюровĕн вырсарникун панă пĕлтерĕвĕ паттăр Хĕрлĕ Çар туса пыракан çапăçусене, вăл тăшмана вĕлермелле пыра-пыра çапнине аса илтерчĕ. Германи çарĕсемпе кĕрешес ĕçĕн тĕп йывăрлăхне Хĕрлĕ Çар çулталăк çурă ĕнтĕ хăй çинче тӳссе ирттерет, çапла туса вăл Англипе Америка хăватне ӳстерсе яма тата мобилизацилеме май пачĕ. Сталин иртнĕ эрнере Хĕрлĕ Çар хăйĕн задачине вăрçă пуçланнăранпа туса пынă пекех чыслăн туса пырĕ тесе каланине Хĕрлĕ Çар халĕ пурнăçа кĕртсе пырать.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: советсем çĕнтерни—Гитлер хăйĕн войскисене Хĕвелтухăçĕнчи фронтран илсе каяс пулсан вăл пысăк хăрушлăх умне пырса тухассине пĕлтерет. Гитлерăн ресурсĕсем сахалланса çитнĕ. Паллах ĕнтĕ, Гитлерăн оборонăна куçма тивет, анчах та вăл часах хăйне хӳтĕлейми пулĕ, мĕншĕн тесессĕн Гитлерăн союзникĕсем хальхи вăхăтра Гитлертан хăранипе кăна унпа килĕшсе ĕçлеççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентствин обозревателĕ Лонг çапла калать: Сталинград районĕнче совет войскисем наступлени туни пĕтĕм Хĕвелтухăç фронтĕнчи ларăва улăштарса ячĕ. Вăл çакна кăтартса тăрать: англичансемпе американецсем тĕнĕл держависен позицийĕсене Вăтаçĕр тинĕсре хăратса тăнă вăхăтра Совет Союзĕ хĕвелтухăçĕнче пуçарулăха хăйĕн аллине илчĕ тата вăл Германин Сталинград районĕнче тăракан мĕнпур войскисемшĕн хăрушлăх кăларса тăратать, тет.

США

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 2[illegible]-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Сталинград районĕнче наступлени пуçласа яни çинчен Совет Информаци Бюровĕ ноябрĕн 22-мĕшĕнче пĕлтерни Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче хаваслă çĕнĕ хыпар пулса тăнă. Пичетпе радио çав событи çинчен Çурçĕр Африкăри, Çĕнĕ Гвинейăри тата ытти фронтсенчи событисем çинчен çырнинчен нумайрах çыраççĕ, нумайрах калаççĕ.

Англи правительствин составĕнчи улшăнусем

ЛОНДОН, ноябрĕн 2[illegible]-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Стаффорд Криппс çар кабинечĕн составĕнчен тухнă, ăна авиаци промышленноçĕн министрĕ пулма уйăрса лартнă. Герберт Моррисона Криппс вырăнне çар кабинечĕн членĕ пулма уйăрса лартнă, вăл шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăхăн министрĕн вырăнĕнчех юлать. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Криппс çар кабинечĕн составĕнче юлма кăмăл туман, мĕншĕн тесен унăн çĕнĕ вырăнта техникăллă ĕçпе нумай ĕçлеме тивет.

Идена общинăсен палатин лидерĕ пулма уйăрса лартнă, вăл ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн вырăнĕнчех юлать. Халиччен авиаци промышленноçĕн министрĕ пулнă Льевлина, министр ранкĕнчех хăварса, снабжени ыйтăвĕсемпе Вашингтонра уполномоченнăй пулса ĕçлеме уйăрса лартнă Льевлин Вашингтонра çар производстви министрĕн ĕçĕсене пур ыйтусем тăрăх та туса пырать.

Оливер Стэнли полковника лорд Крэнборн вырăнне колонисен министрĕ пулма уйăрса лартнă. Крэнборн лорд-личет сыхлавçи вырăнне йышăнать, анчах та çар кабинечĕн составне кĕмест.

Финляндире тыткăна лекнĕ красноармеецсем выçăпа вилеççĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 2[illegible]-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрихран çапла пĕлтерет: ĕненме тивĕçлĕ çынсем каланă тăрăх, Финляндире тыткăна лекнĕ красноармеецсем темиçе пин çын выçăпа аптăраса вилнĕ. Тыткăнри çынсем калама çук йывăр условисенче пурнаççĕ. Хĕлле вĕсен пурнăçĕ татах та начарланĕ.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ кăларнă коммюнике çапла каланă: Англипе Америка войскисем хĕвелтухăçĕнчи секторта план тăрăх пухăнса пыраççĕ. Противникăн çĕр çинчи вăйĕсемпе тытăçусем пулса иртнĕ. Союзниксен истребителĕсем Тунисра пыра-пыра тапăннă. Англи бомбардировщикĕсем противникăн Бизертăри докĕсемпе судкисене атакăланă.

Союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн официальнăй представителĕ Тунисри çапăçусем ытларах та ытларах хаярланса пыни çинчен пĕлтернĕ. Германи вăйĕсем, уйрăмах Бизертăпа Тунис секторĕсенче, лайăх позицисем йышăнса тăраççĕ, вĕсем хăйсен аллинче сывлăш вăйĕсем те чылай йышлăн пухса тăраççĕ. Çыранран 22 миля кăнтăр еннерехре кĕрешекен союзниксен войскисем çине противник пырса тапăннă.

Мароккăри радио çапла пĕлтрет: Англин пĕрремĕш армийĕ, союзниксен войскисемпе французсен войскисем пулăшса пынипе, Бизерта-Тунис секторĕнче Германин позицийĕсене хирĕç вăйлă наступлени пуçласа янă. Тыткăна илнисем пур.

ÇУРÇĔР АФРИКĂНА ДЕСАНТСЕМ АНТАРНĂ ЧУХНЕ АМЕРИКĂН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕМ ТУСНĔ ÇУХАТУСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 2[illegible]-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çакăн пек хыпар парать: США-н çар министерстви Вашингтонра пичетлесе кăларнă пĕлтерӳ тăрăх, Çурçĕр Африкăна десантсем антарнă чухне Америка войскисен, вилнисене, аманнисене тата пĕр хыпарсăр çухалнисене пĕрле шутласан, 1.910 çын пĕтнĕ.

АНГЛИЧАНСЕН ЛИВИРИ НАСТУПЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 2[illegible]-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер ирхине ирех Британи чаçĕсем Аджедабие кĕнĕ. Вĕсем Эль-Агейла еннелле чакса пыракан противникпа çапăçаççĕ. Тăшман Джало базисенчен тухса кайнă, ăна халĕ англичансем йышăнса илнĕ.

Ноябрĕн 2[illegible]-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Бизертăна, Палермори (Сицилия) базăсене тапăннă.

«Рейнольдс ньюс» хаçат: Эль-Агейлашăн çапăçасси çăмăл мар пулать, тесе çырать. Роммель англичансене хирĕç нимĕçсен 10 пине çити салтакне тата итальянецсен 50 пине çити салтакне кăларса тăрататать пулмалла. Италипе Германи вăйĕсен хыçĕнче Триполитанири 350 мильăна тăсăлакан çул пур. Вăл çула хăй вăхăтĕнче итальянецсем тунă, ун тăрăх ятарласа снабжени парса тăракан базăсем туса лартнă.

Н. Мранька

Амăшĕ ылханни

Пĕр актлă пьеса

(Юлашки. Пуçламăшĕ 274-мĕш номерте).

РОЗА. Калатăп, вĕт. Пăхсам, пичче, эпир сана та геройсем хушшине кĕртсе лартнă.

ГЕНА. Орден илнĕ пулсан тата лайăхрахччĕ.

РОЗА. Чăнах пичче, мĕншĕн орден паман-ши сана?

СЕМУК. Аçтан пурне те орден парса çитерĕнĕр. Геройсем нумай халĕ.

РОЗА. Эпир кĕтнĕччĕ. Пăх-ха, акă, чăваш çынни Ефимов, Мирон пичче, вăл Совет Союзĕн Геройĕ.

СЕМУК. Пулĕ...

ГЕНА. Унăн сăнне «Красная Чувашия», «Чăваш Коммуни» хаçатсем çине пичетлесе кăларнă.

СЕМУК. Эпĕ... тепринче илетĕп...

ГЕНА. Илетĕн-и, пичче?

СЕМУК. Илетĕп, Гена.

РОЗА. Савăнăçчĕ вара.

ХРЕСТИНЕ. Роза, Гена!.. Пиччуна текех ан антратăр çакă. Вăл аякри çултан килнĕ. Унăн канас пулать.

ГЕНА. Урăх чăрмантармастпăр, анне.

РОЗА. Çи, пичче...

(Кĕтерук кĕрет).

КĔТЕРУК. Татах килес-ха...

ХРЕСТИНЕ. Килех, Кĕтерук.

СЕМУК. Салам, Кĕтерук аппа! (Сĕтел хушшинчен тухса ал тытать).

КĔТЕРУК. Телейлĕ çавăрăнса килтĕн-и?

СЕМУК. Çакăн пек çиткелерĕм, Кĕтерук аппа.

КĔТЕРРУК. Манăн Васли те килчĕ.

СЕМУК. Васли килчĕ-и?..

ХРЕСТИНЕ. Чăнах-и?

КĔТЕРУК. Чăн ара! (Çыру кăларса кăтартать). Акă!..

ХРЕСТИНЕ. Çыру янă-и?

КĔТЕРУК. Çыру янă, Хрестине.

ХРЕСТИНЕ. Эккея. (Семук çине пăхса илет). Пĕлнĕ-тĕлмен мĕнле çырнă эсĕ?

СЕМУК. Çук, анне. Тен çыру урăх çынран?..

КĔТЕРУК. Ваçлирен ара. Хут вулама пĕлмесен те, алçырăвĕнчен чухлатăп. Çавă çырнă.

СЕМУК. Тĕлĕнмелле... Чиперех аступăм. Каялла тухнине курмарăм.

КĔТЕРУК. Аçта пурне те курса çитсĕрĕн унта. Пин халăх...

СЕМУК. Мĕн çырать?

КĔТЕРУК. Çавна пĕлеймерĕм-ха. Эсĕ килнине чӳречерен куртăм та, шикама та вулаттармасăр правленинчен чупса тухрăм. Савăнăç пĕрле пултăр терĕм. Эсир Ваçлипе юлташлăччĕ...

СЕМУК. (Хумхансарах). Çапла.. юлташчĕ..!

КĔТЕРУК. (Çырăва Семука парса). Вула-ха, Семук.

ХРЕСТИНЕ. Вăт эсĕ... Эпир кунта ахлататпăр. Çын сывах...

СЕМУК. Уссăр ахлатнă. Эпĕ Ваçли вилнĕ тесе çырманччĕ... Çапăçуран тухайманччĕ вăл...

КĔТЕРУК. Мĕн тăвас тетĕн, шухăшларăмăр çавă. Ĕненес килмесчĕ. Вула-ха, Семук, пĕлер. Мĕн çырать вăл.

СЕМУК. (Хыттăн вулама пуçлать). Пĕтĕм чунтан юратакан, анне... Нумайранпа çыру çыраймарăм, ан çилен. Вăхăчĕ çавнашкал килсе тухрĕ. Пĕр вырăнта пире тăшмансем хупăрласа илчĕç те, эпир хамăр войскăсенчен татăлса юлтăмăр. Пĕр уйăх хушши тăшманăн тылĕнче çапăçса çӳрерĕмĕр. Нумай сиен кӳтĕмĕр эпир вĕсене. Нумай вĕлертĕмĕр. Пĕринче, эпĕ хамăн алăри пăшалпа çирĕм çичĕ фашиста персе вĕлертĕм. Фашистсен икĕ танкне çĕмĕртĕм. Командовани мана тав турĕ. «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăлама Правительство умне тăрататпăр терĕç...

РОЗА. Вăт, герой.

ГЕНА. Чăн герой!

ХРЕСТИНЕ. Аван...

КĔТЕРУК. Вула, Семук...

СЕМУК. (Малалла вулать). Анне, пĕлтĕп, эсĕ çемçе кăмăллă. Пире те йăваш пулма вĕрентеттĕн. Эпĕ сан сăмахран тухса курманччĕ. Халĕ мĕнле хăйнă-ши вăл çынна вĕлерме тесе калăн. Эпĕ, çирĕм çичĕ фашиста çеç мар, çĕрĕшпех вĕлернĕ вĕсене. Çапах та сахал вĕлернĕ тесе шутлатăп. Вĕсем çын мар, анне. Пуççăр, икĕ ураллă тискер кайăксем. Мĕн чухлĕ асап, мĕн чухлĕ хĕн-хур кӳреççĕ вĕсем пирĕн совет çыннисене. Мĕн курнипе çырма та хăрушă. Пĕр каçхине эпир Березовка текен яла хупăрласа илтĕмĕр. Вăл ялта пĕр амăшĕпе вунтăватă çулхи хĕрачи пурăннă. Фашистсен икĕ салтакĕ пырса кĕнĕ те çакă киле, çамрăк хĕре тапăннă. Амăшĕ хирĕç тăма хăтланнă. Фашистсем вара амăшне çыхса лартнă та, унăн куçĕ умĕнчех, хĕрачине мăшкăл тунă. Кайран, амăшĕн кăкрине касса илсе, çавă кăкăрпа хĕрĕн çăварне хупласа вĕлернĕ.

ХРЕСТИНЕ. Кай, чун çӳçенсе кайрĕ.

КĔТЕРУК. Çынçисенсем тени тĕрĕсех пуль...

СЕМУК. (Вулать). Хăвах шухăшла, анне! Мĕнле тӳсĕн вĕсене вĕлермесĕр?.. Тăшманăн хăрушлăхне туйса илмен этемсем халĕ те пур-ха тен пирĕн колхозра. Вĕсем час-часах колхоз ĕçĕнче вĕлт-палти ĕçлеççĕ. Колхозăн пурлăхне упрама тăрăшмаççĕ. Кунашкалĕн ирттерме тăрăшассĕ. Манăн ятран кала вĕсене, анне, унашкал çынсем халĕ пулмалла мар. Маншăн ан хуйхăр, анне. Эпĕ сывах. Совет халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн хамăн çамрăк пуçăма памалла пулсан, нимĕн иккĕленмесĕрех паратăп. Эсĕ мана Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулма тивĕç пăхса ӳстернĕшĕн чунтан тавтăватăп.

ХРЕСТИНЕ. Епле аслă çырнă вăл...

КĔТЕРУК. (Куççульне шăлать).

ХРЕСТИНЕ. Йĕрен мар-и эсĕ, Кĕтерук? Мĕншĕн йĕретĕн?

КĔТЕРУК. Савăннипе тӳсеймерĕм, Хрестине. Ывăлăм, хăйĕн тӳрĕ пурнăçĕпе чыслишĕн савăнса тӳсеймерĕм.

СЕМУК. (Хăй тĕллĕн) Авă, мĕнле?..

РОЗА. Кĕтерук аппа, Ваçли пиччен портречĕ çук-и сирĕн?

ГЕНА. Чăнах, Кĕтерук аппа! Эпир ăна, пичче сăнĕпе юнашар вырнаçтаратăмăрччĕ.

КĔТЕРУК. Пулмаллаччĕ... Çартан янă портречĕ те пур.

ХРЕСТИНЕ. Вуласа пĕтертĕн-и?

СЕМУК. Çук-ха.

КĔТЕРУК. Вула, Семук.

СЕМУК. (Вулать). Астуман, анне. Тата çакна çырса пĕлтерес тенĕччĕ. Семук пире... (Хыттăн вулама чарăнса хăй ăшĕнче вулать. Вуланă çемĕн ытларах та ытларах хумханни палăрать. Çырăва лӳчĕркесе чăмăртать).

КĔТЕРУК. Семук?..

ХРЕСТИНЕ. Мĕн пулчĕ сана?

СЕМУК. Ку çырăва çапла çеç тумалла. (Çурса пăрахма тăрать).

РОЗА. Пичче!

ГЕНА. Мĕн айкашан эсĕ, пичче?

ХРЕСТИНЕ. (Васкавлăн пырса Семук аллине тытать). Ухмаха ертĕн-и мĕн? Мĕнле хăятăн çын çырăвне?

СЕМУК. Пĕр тĕрĕс сăмах та çук унта!

ХРЕСТИНЕ. Чим-ха, Симук, мĕн тĕрĕс мар вара.

СЕМУК. Пĕтĕмпех.

КĔТЕРУК. Ара, Семук...

ХРЕСТИНЕ. Апла мар-ха, Кĕтерук... Сан Ваçли суякан çын пулман. Колхоз председателĕ чухне те халăх юрататчĕ ăна.

КĔТЕРУК. Хам та çавна каламастăп-и? Ырă сунса килтĕм. Эсĕ каланипе çухалчĕ манăн Васли. Халĕ тупăнни сана та савăнтарать пулĕ тесе шухăшларăм. Эсĕ, маншăн темрен те хаклă çырăва çурса тăкасшăн. Хрестине, кӳр çырăва.

ХРЕСТИНЕ. Чим-ха Кĕтерук.., Семук, мĕн пулнă сана?

СЕМУК. (Нимĕн шарламасăр питне пытарса, çурăмĕпе çавăрăнса тăрать).

ХРЕСТИНЕ. Ма нимĕн те шарламастăн? Мĕн тесе çырнă вăл сан çинчен?. Темĕн пытаратăн эсĕ пирĕнтен. Ачасем, вулăр-ха... (Çырăва Генăна парать).

ГЕНА. (Сасăпа вулама тытăнать). Чунтан юратакан анне...

ХРЕСТИНЕ. Ăна мар эсĕ... Пиччӳ чарăнничен вуласа кай.

ГЕНА. Халех, анне. Тупрăм... (Вулать). Семук пире сутрĕ...

ХРЕСТИНЕ. Мĕн терĕн эсĕ?

ГЕНА. Семук пире сутрĕ тесе çырнă.

ХРЕСТИНЕ. Мĕнле сутнă, кама сутнă? (Пĕрре Гена çине, тепре Семук çине пăхса илет).

ГЕНА. Пĕлместĕп...

КĔТЕРУК. Вула эсĕ...

ХРЕСТИНЕ. Малалла вула...

ГЕНА. (Ирĕксĕрленсе вулать). Тăшман пирĕн çине тапăннă вăхăтра, çапăçас чухне, юлташсене пулăшас чухне пăрахса тарчĕ. Петĕм явăл пуçне, тивертеймерĕм пулмалла. Çавăнтанпа таçта кайса çухалчĕ... (Вулама чарăнать).

КĔТЕРУК. Вуласа пĕтрĕ-и?

ГЕНА. (Шарламасăр тăрать).

РОЗА. (Паттăрланса). Мĕн пăхса тăратăн? Вуламастăн пулсан пар хама! (Çырăва Гена аллинчен илсе вулама пуçлать)... Кайса çухалчĕ... Ку мар-ха... Акă тупрăм... Амăшне кайсах кала, Сĕртрĕ вăл унăн ырă ятне. Сутрĕ совет халăхне...

ХРЕСТИНЕ. Мĕн илтетĕп эпĕ?..

КĔТЕРУК. Ак тамаша! Çын пулманçке эсĕ, Семук. Мана, мана Васли çинчен суя хыпар сарса çунтартăн. Сапашкал киле таврăнниччен, манăн Ваçли унтах выртса юлтăр. Кӳр-ха çырăва (Роза аллинчен çырăва илет).

ХРЕСТИНЕ. Тăхта-ха, Кĕтерук...

КĔТЕРУК. Манăн васкамалла. (Тухса каять).

ГЕНА. Ай, мĕн тунă эсĕ, пичче...

РОЗА. Мĕнле тухас ĕнтĕ урама...

ХРЕСТИНЕ. Аçта кайса кĕрес?.. Мĕн кăтартрăн эсĕ пире?.. Мĕн?.. Тăшман та амантман сана?.. Кала?

СЕМУК. Мĕн калас манăн?.. Хăвăр кайса курасчĕ эсир унта.. Тӳсме çук..!

ХРЕСТИНЕ: Апла иккен.. Тăшман амантман сана?.. Ваçли персе тивертнĕ?.. Ма нимĕн те шарламастăн?..

СЕМУК. (Пуçне салхуллăн çĕрелле усать).

ХРЕСТИНЕ. Ял-йышăн куçĕ умне мĕнле курăнас?.. Мĕн кăтартрăн эсĕ пире?.. Кам вырăнне шутларăн?..: Вата аннӳне, чечек пек шăллуна, йăмăкна та хĕрхенмерĕн-и?

СЕМУК. Анне...

ХРИСТИНЕ. Ан чĕн, мана! Хаяр тăшман халăх юнне юхтарать. Мĕн тери куççулĕ юхать. Пĕтĕм халăх хаяр тăшманпа хăйĕн пурнăçне хĕрхенмесĕр çапăçать. Эсĕ тӳсеймен. Эсĕ тарса хăтăласшăн пулнă. Юлташусене пăрахса хăварнă... Ылханатăп сана! Тухса кай пирĕн кил-çуртран.

(Роза нимĕн шарламасăр Семук портретне стена çумĕнчен хăпатса илет. Çӳп-çап кĕтессинелле ывăтса ярать)

ГЕНА. Пичче çук пирĕн, анне...

ХРЕСТИНЕ. Çук, ачасем... Çук.

ЧАРШАВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11910 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 53 84 п.